24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ДЕКАБРЬ 13 ШАМАТКУН 294 (6009) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетариссем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Старший сержанта И. М. Мамедова Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пур нăйăа кĕртиешĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн старший сержанта Истрафуил Магорилович **Мамедова, Ленин орденĕ** тата **«Золотая звезда»** медалĕ парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти декабрĕн 11-мĕш.

Комсомолецсемпе пионерсем— совет шкулĕнче вĕренекенсен вожакĕсем

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче çĕнтерӳ тума, Гитлерăн вăрă-хурăхла, тискер кайăкла çарĕсене çапса аркатма, нимĕçсен фашистла оккупантĕсене пурне те, пĕр сын юлмиччен, вĕлерсе пĕтерме пирĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле, кĕрешӳре хамăран паттăрлăхпа хăюлăха, хамăрăн организованноçа кăтартмалла, çирĕп дисциплинăллă пулмалла.

Ку требовани пысăкскисене те, çамрăккисене те тата шкул ачисене пĕр пекех тивет. Ирĕр тăшман никама та хĕрхенсе тăмасть. Икĕ уралла тискер кайăксем — гитлеровецсем—шкулсемпе ачасен сачĕсем çине бомбăсем пăрахаççĕ, ним айăпсăр ачасене, вĕсен амăшĕсене ирсĕррĕн мăшкăллаççĕ, асапланаççĕ, пĕрес-пере вĕлерессĕ. Çапла тискер кĕçех туса, фашистсем пирĕн совет халăхне хăратса ӳкерме пăхаççĕ.

Анчах фашистсем йăнăшаççĕ. Халь, вăрçă кунĕсенче, ачасем те хăйсене пысăк çынсем пекех тытаççĕ. Вĕсем, хăраса ӳкес вырăнне, фронтра тăшмана хирĕç паттăрăн çапăçакан ашшĕне е ничĕшĕпе юнашар тăма хатĕрленеççĕ. Колхозри ĕçсене тунă çĕрте, тимĕр-тăмăр пухас, Хĕрлĕ Çара кайнисен çемьисене пулăшас, боецсем валли парнесем ярас ĕçре чăн-чăн совет патриочĕсем пек, хăюллă, ĕçе юратакан, тăван çĕршыва парăннă çынсем иккенне кăтартса параççĕ.

Ку тĕллĕпе совет учителĕсем хăйсен ачисемпе мухтанма пултараççĕ. Анчах тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларни хальхи вăхăтра вырнаçусăр. Вăрçă вăхăтĕнчи обстановка мирлĕ вăхăтринчен пачах урăхла. Вăрçă вăхăтĕ ачасене воспитани парас ĕçре те хăйĕн çĕнĕ требованийĕсене кăларса тăратать. Ачасене пĕчĕкренех тĕреклĕ ӳсме, ниепле йывăрлăхпа хăрушлăха пăхмасăр кĕрешме хатĕр тăма, хурçă пек çирĕп дисциплинăллă пулма хăнăхтармалла.

Аслă Сталин яланах: çĕнтерӳ тума пĕр хăюлăх кăна çителĕксĕр, тесе вĕрентет. Хăюлăхпа пĕрле тата пĕлӳпе опыт кирлĕ. Хальхи вăрçă боецсенчен уйрăмах пысăк пĕлӳ ыйтать. Çавăнпа кашни комсомолец, кашни пионер хальхи «хорошо», «отлично» паллăсемпе çеç вĕренмелле. Хăйĕн хыççăн ытти юлташĕсене те ертсе каймалла. Вĕренӳ йĕркеллĕ пулса пытăр тесен, комсомолецсем ĕçре учительсене, шкул директорне пулăшма тивĕçлĕ. Комсомолец, пионер, шкул ачи хăйĕн учителĕпе директорне, красноармеец хăйĕн командирне юратнă пекех, юратмалла.

Пионерсемпе комсомолецсем нумайĕшĕсем Сталин юлташăн вĕрентĕвне чыслăн пурнăçа кĕртеççĕ. Шупашкар хулинчи пĕрремĕш номерлĕ шкулти Галя Александрова, Леля Иванова, Лилия Григорьева пур предметсемпе те отлично вĕренеççĕ. Вĕсем уроксене яланах тĕплĕн хатĕрленсе пыма ĕлкĕреççĕ. Комитет членĕ комсомолка Наталия Кроль—шкулти отличница. 2-мĕш номерлĕ шкулти Маргарита Фадеева, Тамара Москвина, Юрий Игнатьев, Владя Талдыкин, Женя Фомина пионерсем те «отлично» паллăсем кăна илеççĕ. Наталия Бочарова отлично вĕренет, çав вăхăтрах отряд вожатăйĕ пулса ĕçлет. Кашни кунах пионерсемпе калаçусем ирттерет.

Пионерсемпе комсомолецсен ыранхи кун çинчен те шухăшламалла. Паян эсĕ тĕренекен, ыран боец, тăван çĕршыва сыхлакан пулатăн. Ун чух вара вăрçăн сложнăй машинисемпе: танксемпе, самолетсемпе ĕçлеме лекет. Физикăна, химие, математикăна тата ытти наукăсен никĕсĕсене вĕренмессен, вĕсемпе мĕнле ĕçлĕн?

Вăрçă пĕтсен, нимĕç оккупантĕсене пурне те, пĕр сын юлмиччен çапса çĕмĕрсен, социализмла хуçалăха юсас тапхăр пуçланать. Ун чухне станоксем патне тăрса инженер, техник е строитель пулса ĕçлеме лекет. Каллех пĕлӳ кирлĕ пулать. Çавăнпа халĕ хаклă вăхăта сăр минута та сая ямаллăа мар.

Комсомолецсемпе пионерсем яланах шкулти массăн вожакĕсем пулнă. Вĕсен, вĕрентӳри пекех, обществăшăн усăллă ĕçре пур ачасемшĕн те пример пулса тăмалла. Вăрçă кунĕсенче уйрăмăнах вĕсем пур ĕçре те вожакесем, ертсе пыракансем пулмалла. Шкул ачисем колхозсене уйри тырпула пуçтарса кĕрес тĕлĕшпе нумай пулăшрĕç. Чĕкĕрварти вăтам шкулта вĕренекенсем (Сĕрпӳ р-нĕ) пурте тенĕ пекех 80—100 шер ĕçкуяĕ ĕçлесе илнĕ. Вĕсем колхоза 65 гектар çинчи çуртыррине вырса, 9 гектар çĕрулми кăларса панă. Красноармейски вăтам шкулти ачасем те колхоза 76 гектар тырă вырса панă, 66 гектар çинчи çĕрулмине пуçтарса кĕнĕ. Ачасем мĕнпурĕ 978 ĕçкунĕ тунă. Унсăр пуçне вĕренекенсем воскресниксенче 30 ĕçкунĕлĕх ĕçленĕ. Çав ĕçкунĕсемшĕн тивекен тупăша сборона фондне хывнă.

Ишлей районĕнчи «Звезда» колхоза та ялхуçалăх ĕçĕсене пуçтарса кĕме шкул ачисем чылай пулăшнă. 10-мĕш класра вĕренекен комсомолец Варсонофий Красноз суллахи вăхăтра 1-мĕш бригадăн бригадирĕ пулса ĕçленĕ. Çамрăк пулин те, вăл ĕçре ытти бригадирсене пример кăтартса пынă. Колхозниксене тăтăшах хаçат-журнал вуласа панă. Вĕсен ĕçленĕ ĕçкунĕсене вăхăтра, тĕрĕс шутласа, кашни кун уйрăм колхозник миçе ĕçкунĕ тунине каласа кăтартнă. Çавăнпа колхозниксем ăна юратнă. Халĕ вĕрентӳ çулĕ пуçлансан та, Краснов колхоза пулăшать.

Пионерсемпе комсомолецсем Хĕрлĕ Çар ретне кайнисен çемьисене пулăшас ĕçе организацилеççĕ. Шупашкар хулинчи 2-мĕш номерлĕ шкулта 8-мĕш класра вĕренекен Алексеева Хĕрлĕ Çара кайнă Анисимован çемьине пулăшать. Вĕсем патне кайса шыв кӳрет, пасара кайса продуктсем илсе килсе парать, кил-çурт тирпейлет. Кутемерти туллимар вăтам шкулта вĕренекен пионер Вася Семенов та пĕр красармеецăн çемьине шефа илнĕ. Ун пек примерсем сахал мар.

Республикăри пионерсемпе шкул ачисем кăçал тимĕр-тăмăр, шăлан çырли тата ăмел ямалли кĕленчесем пухас тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлерĕç. Шупашкар хулинчи пионерсемпе комсомолецсем 85 тонна ытла тимĕр-тăмăр пухнă. Комсомолецсемпе çамрăксен виççĕмĕш воскресникĕнче кăна 90 килограмм шăлан çырли пухăннă.

Вĕренекен ачасем тăван çĕршыва, фронта пулăшас енĕпе те пысăккисенчен юлмаççĕ. Пăрачкаври вăтам шкулта вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне 130 килограмм аш-какай, 200 штука çăмарта тата ытти çавăн пек апат-çимĕçсем ярса панă. Нумай шкулсенче боецсем валли парнесем ярас ĕçе йĕркеленĕ.

Шкулсенчи комсомолецсемпе пионерсем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе активлăн ĕçлеççĕ. Кашниех мĕн чухлĕ те пулин парса тăван çĕршыва пулăшасшăн тăрăшать. Етĕрнери вăтам шкулти ачасем бронепоезд тума 10—15-шер тенкĕ хывнă.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕ пуçлансанах, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ вăтам шкулсенчи комсомол организацийĕсемпе вĕренекен комсомолецсене чĕнсе уçă сыру сырнăччĕ. Фашизма хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче шкулсенчи комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсене çав сырура аван кăтартса панă.

Комсомолец ытти ачасемшĕн пример пулса тăмалла. Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союз членĕн хисеплĕ ятне тытмалла.

Сыхăлăхлă пулăсси, сахалтарах сӳпĕлтетесси, тĕрлĕрен кирлĕ-кирлĕ мар хыпарсене сарса çӳрекенсене хирĕç кĕрешесси — комсомолец-вĕренекенĕн обязанноçĕ. Комсомолец хăйне тата хăйĕн юлташĕсене хăюллă пулма, кирек мĕнле йывăрлăхпа хăрушлăхран та найăкăшмасăр иртсе кайма вĕрентмелле. Ку тĕлĕшрен пирĕн ачасене Хĕрлĕ Çаран паттăр боецĕсем пархатарлă пример параççĕ.

Хальхи вăхăтра комсомолец вĕренекенсен çарпа физкультура ĕçне вĕренесси çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Шкулта çар ĕçне тĕплĕн вĕренни пулас боецсене тăшмана хăвăртрах çапса çĕмĕрме пулăшĕ.

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсене сержант Глубина, красноармеец Зарубина, политрук Ведмеда, красноармеец Швецова, старший лейтенант Мельникова т. ыт. те панă.

Награднăланисен ячĕпе Совет Союз Геройĕ лейтенант Алпеев юлташ тухса сăмах калать. Вăл—гвардеецсем малашне те тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырĕç,—тенĕ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă. Хĕвеланăç тата Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕсенчи хăшпĕр участоксенче пирĕн войскăсем, противника хирĕç хаяр çапăçусем туса пырса, малалла куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Декабрĕн 10-мĕшĕнче нимĕçсенне 6 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ.

* * *

Декабрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен 20 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 420 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, тăшманăн полевой тата зенитнăй орудисене прислугисемпе пĕрлех 40 оруди тата боеприпассем турттарса пыракан 140 лавне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн пехотине пĕр полка çити вĕлерсе пĕтернĕ тата сапаласа янă.

* * *

Фронтăн Калинин енчи участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Юшкезич юлташăн чаçĕсем виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенчен халăх пурăнакан 28 пункта туртса илнĕ тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем пĕр кун хушшинче нимĕçсенне 12 оруди, 94 пулемет, 20 автомобиль, 300 лаша тата ытти тĕрлĕ трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен пирĕн летчиксем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 5 танкне; 250 автомашинине, штабăн 6 автобусне, 4 орудине, боеприпассем тиенĕ 100 лавне, 18 зенитнăй пулеметне, 3 минометне тата горючи цистернине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Старшнй лейтенант Колтунов юлташ ертсе пыракан разведчиксен группи К. ялĕнче нимĕçсен штабĕ вырнаçнă çурт çине гранатăсем пăрахнă. Хăюллă разведчиксем гранатăсемпе тата пулеметсемпе автоматсенчен персе фашистсен икĕ офицерне тата 33 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Украинăн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенчи партизансем фашистла захватчиксене хирĕç хаярран кĕрешеççĕ. Приазовье районĕнче кĕрешекен Ч. юлташăн партизанла отрячĕ çак куннене нимĕçсем минăсем турттаракан 6 шаландăна, боеприпассем тиенĕ 37 автомашинăна пĕтерсе тăкнă: Колхоз председателĕ М. юлташ организацилеснĕ партизансен отрячĕ тăшмансене хирĕç хăюллăн çапăçать. М. пункт патнелле каякан çулпа противникăн транспорт колоннисем иртсе пынă. Çав колонна çине пырса тапăнса, партизансен отрячĕ нимĕçсен боеприпассем тата обмундировани турттарса пыракан 45 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Кайран çав отрядсем нимĕçсен 19 салтакне, яла халăхран тырă туртса илме пынăскерсене, вĕлерсе пĕтернĕ. Кӳршĕри ялта Л. юлташăн партизанла отрячĕ пĕр каçра 61 фашиста, çав шутра 11 офицера пĕтерсе тăкнă. Ноябрĕн 28-мĕшĕнче разведка, партизансем тăракан çĕртен инçех мар нимĕç автоматчикĕсен отрячĕ вырнаçнă, тесе пĕлтернĕ. А. юлташăн партизанла отрячĕ нимĕç автоматчикĕсене хирĕç çийĕнчех çапăçăва тухнă. 60 автоматчика пĕтерсе тăкса, партизансем ытти автоматчиксене хăваласа янă. К. юлташăн отрячĕ сывăхри çул тăрăх нимĕçсен пехотинецĕсене хуралласа пыракан обозĕ иртсе пыни çинчен пĕлнĕ. Партизансем çул çинче засада тунă та, нимĕç пехотинецĕсене сывăха ярса, вĕсем çине пулеметсенчен персе, 30 салтака вĕлернĕ, 20 лава тата 53 лашана пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пăрçĕ. Каçсерен хула урамĕсене нимĕçсем ушкăнăн-ушкăнăн кăна тухса çӳрерĕç. Каунас хулин хĕррисенче декабрĕн 3-мĕшĕнче каçхине нимĕç салтакĕсен взвочĕ çине юханшыв тепĕр енчен пăшалсенчен пенĕ, икĕ салтакĕ вĕлернĕ, тăваттăшне амантнă.

* * *

Новосибирск облаçĕнчи ĕçсыннисем хăйсен вăйне хĕрхенмесĕр ĕçлеççĕ. Декабрĕн 2-мĕшĕнче Кузбасс çĕркăмрăкĕ кăлармалли çулталăклăх программăна тултарнă. Горняксем кăçалхи çул вĕçленичченех планран ирттерсе татах 100-шер пин тоннă кăмрăк пама пулнă. «Ленуголь» трестри Киров ячĕпе тăракан шахтăри забойщик Бюро юлташ нормăна 790-шар процент тултарса пырать. Омск чугунçулĕн Тайга ялтă станцинчи депора паровозсене çуса тасатакан цех коллективĕ, декабрĕн 5-мĕшĕнче хăйĕн планне нумай ирттерсе тултарса, çав кун ĕçлесе илнĕ пин тенкĕ çурă ытла укçана çĕршыв оборонин фондне хывнă. Слесарь Гандже задание—378 процент, электросварщик Пусковой—464 процент тултарнă.

* * *

Декабрĕн 10-мĕшĕнче Германин информаци бюровĕ, самолечĕсем Рыбинскри авиаци ва бомбăсем пăрахнă тесе тата çавна пула заводăн икĕ цехне çĕмĕрнĕ, тесе пĕлтернĕ. Совет Информаци Бюровĕ çапла пĕлтерет: нимĕç самолечĕсем Рыбинск завочĕн цехĕсем çине чăн та темиçе бомба пăрахнă. Анчах та нимĕçсем Рыбинск çине вĕçсе килме бензин ахалех сая янă. Вĕсен тăрăшни те харама кайнă, мĕншĕн тесен çав заводăн мĕн пур оборудованине тата рабочийĕсене хăй вăхăтĕнче тыла илсе тухнă. Çавăн пирки те нимĕçсем пăрахнă бомбăсем пĕр станока та сиенлеме пултарайман. Мĕншĕн тесен, çав бомбăсене нимĕçсем заводăн пушă цехĕсем çине пăрахнă. Çавăнпа та нимĕçсем тапăнса вĕçсе килнĕ чухне жертвăсем те пулман.

Декабрĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Крюченкин юлташăн часĕсем виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенчен халăх пурăнакан 28 пункта туртса илнĕ тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Фронтăн теперĕн участокĕнче пирĕн боецсем пĕр кун хушшинче нимĕçсенне 12 оруди, 94 пулемет, 20 автомобиль, 300 лаша тата ытти тĕрлĕ трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен пирĕн летчиксем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 5 танкне; 250 автомашинине, штабăн 6 автобусне, 4 орудине, боеприпассем тиенĕ 100 лавне, 18 зенитнăй пулеметне, 3 минометне тата горючи цистернине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Старшнй лейтенант Колтунов юлташ ертсе пыракан разведчиксен группи К. ялĕнче нимĕçсен штабĕ вырнаçнă çурт çине гранатăсем пăрахнă. Хăюллă разведчиксем гранатăсемпе тата пулеметсемпе автоматсенчен персе фашистсен икĕ офицерне тата 33 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Украинăн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенчи партизансем фашистла захватчиксене хирĕç хаярран кĕрешеççĕ. Приазовье районĕнче кĕрешекен Ч. юлташăн партизанла отрячĕ çак куннене нимĕçсем минăсем турттаракан 6 шаландăна, боеприпассем тиенĕ 37 автомашинăна пĕтерсе тăкнă: Колхоз председателĕ М. юлташ организацилеснĕ партизансен отрячĕ тăшмансене хирĕç хăюллăн çапăçать. М. пункт патнелле каякан çулпа противникăн транспорт колоннисем иртсе пынă. Çав колонна çине пырса тапăнса, партизансен отрячĕ нимĕçсен боеприпассем тата обмундировани турттарса пыракан 45 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Кайран çав отрядсем нимĕçсен 19 салтакне, яла халăхран тырă туртса илме пынăскерсене, вĕлерсе пĕтернĕ. Кӳршĕри ялта Л. юлташăн партизанла отрячĕ пĕр каçра 61 фашиста, çав шутра 11 офицера пĕтерсе тăкнă. Ноябрĕн 28-мĕшĕнче разведка, партизансем тăракан çĕртен инçех мар нимĕç автоматчикĕсен отрячĕ вырнаçнă, тесе пĕлтернĕ. А. юлташăн партизанла отрячĕ нимĕç автоматчикĕсене хирĕç çийĕнчех çапăçăва тухнă. 60 автоматчика пĕтерсе тăкса, партизансем ытти автоматчиксене хăваласа янă. К. юлташăн отрячĕ сывăхри çул тăрăх нимĕçсен пехотинецĕсене хуралласа пыракан обозĕ иртсе пыни çинчен пĕлнĕ. Партизансем çул çинче засада тунă та, нимĕç пехотинецĕсене сывăха ярса, вĕсем çине пулеметсенчен персе, 30 салтака вĕлернĕ, 20 лава тата 53 лашана пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕç салтакĕсен ушкăнне тыткăна илнĕ. Пĕрремĕш пехотнăй дивизин 22-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ Отто Шульц салтак çапла пĕлтернĕ: «Питех те пысăк çухатусем тӳснине пула, пирĕн полка 43-мĕш пехотнăй полкпа пĕрлештерсе йĕркелерĕç. Çав икĕ полкри кашни ротăра 150-шер çын пулса тăчĕ. Юлашки эрне хушшинче кăна 43-мĕш полк питех те пысăк çухатусем тӳсрĕ, унăн ротисенче 80—90-шар çын кăна тăрса юлчĕ. Хĕллехи сивĕсем килсе çитрĕç пулин те, салтаксем çуллахи çипуçĕпех çӳреççĕ. Салтаксем хушшинче тăмлисе янисем ытларах та ытларах пула пуçларĕç. Нумаях пулмасть ротăна валли Германирен 50 мăшăр йĕлтĕрпе çӳреме пултараймаççĕ». 22-мĕш пехотнăй полкран тыткăна лекнĕ Франц Глянкснер çапла каласа панă: «Малти позицисенче 8 кун хушши пулнă хыççăн, 180 çынтан тăракан 5-мĕш ротăри салтаксен пĕтĕм составĕнчен 60 проценчĕ пĕтрĕ, çав шутрах рота командирĕпе взвод командирĕсем те пĕтрĕç. Ытти ротăсенче çухатусем татах та пысăкрах, уйрăмах парашютистсен чаçĕсем пысăк çухатусем тӳсрĕç, вĕсен ротисенче 9—12-шер çын кăна тăрса юлчĕ».

* * *

Гулин хули хĕрринче (Чехословакия) хĕспăшалсен складне взрыв туса аркатнă. Взрыв пулнипе нимĕçсен Хĕвелтухăç фронтне яма хатĕрлесе хунă 15 орудийĕ, 12 танкĕ, 1000 ытла винтовки пĕтнĕ.

„Гитлерпа унăн компанийĕ" ятлă картла вылямалли çуртри жуликсемпе шулерсем

Çакă пуринпĕн те палла: каппайчăх Гитлер 1941 çулта ноябрĕн 7-мĕшĕнче Мускаври Хĕрлĕ площадьре фашистла войскăсен чаплă парачĕ пулать, тесе пĕтĕм тĕнчене шав сарчĕ. Çакă та пуринпĕн те палла: 1941 çулта ноябрĕн 7-мĕшĕнче Мускаври Хĕрлĕ площадьре парад чăнахах та пулса иртрĕ, анчах та вăл Гитлерăн вăрă-хурахла ордисен парачĕ мар, Хĕрлĕ Çар войскисен парачĕ пулчĕ.

Совет войскисем сисĕнтермеллех вăйлăн пыра-пыра çапнă хыççăн Гитлер жуликĕсем парадсемпе мухтанма пăрахрĕç. Ку çеç те мар: нимĕçсен командованийĕ хăйĕн сводкисене пачах урăхларах тонпала пĕлтерме тытăнчĕ. Юлашки сводкăсенче Гитлер банди нимĕç войскисен план тăрăх пулса пыракан наступленийĕ çинчен пĕлтермест ĕнтĕ. Нимĕçсем халĕ Хĕвелтухăç фронтĕнче шартлама сивĕсем тăнипе вăйлă юр суни çинчен пĕлтереççĕ. «Хĕвелтухăç фронтĕнчи операцисемпе вĕсен характерĕ паянхи кунран пуçласа шартлама сивĕ, вырăс хĕлĕ сывхарнинчен тухса пырать»,—теççĕ вĕсем. Çаталăк условийĕсем пысăк наступленийĕпе операцисем тума май памаççĕ иккен те, Германи çарĕн командованийĕ çавăн пирки ун пек наступленисем тума чăрăнса тăрать имĕш. Хĕвелтухăç фронтĕнче пысăк талкăшĕ çинче вырăнти характерлă операцисем кăна пулса иртеççĕ имĕш.

Çапла ĕнтĕ, нимĕçсен фашистла жуликĕсемпе шулерĕсем: «Пирĕн наступление хаяр хĕл, шартлама сивĕсем, юр суни чарса лартрĕ»,—тесе сухăрашаççĕ.

Ку вăл пуçламăшĕнчен тытăнса вĕçне çитиченех суяна çаптарни пулса тăрать, мĕншĕн тесен пирĕн Хĕрлĕ Çар Гитлерăн вăрă-хурахла çарне хĕл çывхарнипе çывхарманнине пăхмасăрах çине-çинех вăйлăн пыра-пыра çапма тытăнчĕ. Чăнахах та ĕнтĕ, ку пуринпĕн те палла: совет войскисен малтанхи пысăк çĕнтерĕвĕ Дон çинчи Ростов районĕнче пулчĕ. Кунта шартлама сивĕсем те, нимĕнле юр та пулман. Нимĕçсем тытса илме шутланă Мускав районĕнче (халĕ вĕсем кунтан каялла чакса тараççĕ) чăн-чăн хĕл пулса çитмен халĕ, мĕншĕн тесен кулленхи сивĕсем ку тараннчĕ. Пачах та урăхла,—кунта нимĕçсемшĕн авантарах çаталăк тăнă. Кăçал хĕл кая юлса тата ерипен кăна сывхарса çитрĕ.

Çапла ĕнтĕ, ĕçĕн çăлтавĕ кунта шартлама сивĕре мар, хĕллехи çаталăк çитнинче те мар, иртăхсе кайнă гитлерла картежниксем хăйсен планĕсене пурнăçа кĕртме пултарайманнинче, çав вăхăтрах тата чунилли Гитлер хăй уçăлса çӳреме айăккарахра хӳтĕ вырăн сыйласа илме шут тунă: хăйĕн çарĕ çак хĕлле поражени тӳссен ответлăха хăй çинчен сирсе ярас тесе, вăл Хĕвелтухăç фронтĕнчен Берлина тухса шунă. Халăхи вăхăтра нимĕçсен фашистла захватчикĕсене «хăрушă шартлама сивĕ» мар, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар сывлăш çавăрма памасăр çапать. Шартлама сивĕсем, вырăс çĕршывĕнчи чăн-чăн шартлама сивĕсем малашне пулмалла.

Вырăнти характерлă текен операцисем çинчен калас пулсан, ун çинчен çакна асăрхаттарма тивет: Гитлерăн войскисем Ростова ылтăн хыççăн: «Эпир чаплăран та чаплă çĕнтерӳ турăмăр, Кавказа пырса кĕме çул уçса хутăмăр», тесе пĕтĕм тĕнчене кăшкăрса пĕлтерчĕç. Анчах та пирĕн Хĕрлĕ Çар Ростова нимĕçсĕнчен каялла туртса илнĕ хыççăн нимĕç командованийĕ: «Ку вăл—вырăнти характерлă операци çеç», тесе сӳпĕлтетет. Гитлер çарĕсем Тихвина тытса илнĕ хыççăн: «Эпир чаплăран та чаплă çĕнтерӳ турăмăр, Ленинград войскисене питех те хĕссе лартрăмăр»,—тесе каппайса пĕтĕм тĕнчене кăшкăрса пĕлтерчĕç. Анчах та халĕ, Хĕрлĕ Çар Тихвина нимĕçсенчен каялла туртса илнĕ хыççăн, нимĕç çарĕсем командованийĕ: «Ку вăл—вырăнти характерлă операци çеç», тесе сӳпĕлтетет. Фашистсем Елеца тытса илнĕ хыççăн пĕтĕм тĕнчене: «Эпир питех те пысăк çĕнтерӳ турăмăр», тесе пĕлтерчĕç. Пирĕн чаçсем Елеца каялла туртса илнĕ хыççăн вĕсем каллех «вырăнти характерлă операци» çинчен калаçса сӳпĕлтетеççĕ.

Çапла хăтланаççĕ «Гитлерпа унăн компанийĕ» ятлă картла вылямалли çуртри вĕт-шакăр шулерсем...

СОВИНФОРМБЮРО.

Пирĕн войскăсем Тихвин патĕнче тытса илнĕ трофейăсем

Малтанлăха шута илнĕ туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн войскăсем Тихвин патĕнче нимĕçсене çакăн чухлĕ трофейăсем тытса илнĕ: 42 оруди, 66 миномет, 190 пулемет, 27 танк, 16 бронемашина, 102 автомашина, 110 автомат, 2700 винтовка, 28.000 снаряд, 17.500 мина, 30.000 граната, 210.000 винтовка патронĕ, т. ыт. çар хатĕрĕсем те пайтах.

«СОВИНФОРМБЮРО»

Гвардеецсене орденсемпе медальсем пани

Декабрĕн 11-мĕшĕнче Миронов полковникăн 5-мĕш гвардейски дивизийĕнче хаваслă кун пулнă. Фронтăн военнăй советĕ хушнă тăрăх, бригаднăй комиссар Литвинов юлташ награднăланă гвардеецсене ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене панă.

Хĕрлĕ Ялав орденĕсене кĕçĕн лейтенант Пономарев, государствăпа хăрушсăрлăхĕн кĕçĕн лейтенанчĕ Пашенков, виççĕмĕш рангри военврач Георгиевская юлташсем илнĕ.

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсене сержант Глубина, красноармеец Зарубина, политрук Ведмеда, красноармеец Швецова, старший лейтенант Мельникова т. ыт. те панă.

Награднăланисен ячĕпе Совет Союз Геройĕ лейтенант Алпеев юлташ тухса сăмах калать. Вăл—гвардеецсем малашне те тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырĕç,—тенĕ. (ТАСС).

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илеççĕ

Сĕрпӳ районĕнчи ялсоветсемпе колхозсенче укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарасси вăйлансах пырать. Тĕнсĕр ялсоветĕн исполкомĕнче ĕçлекенсем—виçĕ çын—150 тенкĕлĕх çырăнса, укçисене те тӳлесе татрĕç. Старакри «Чăваш ЦИК» колхоз членĕсем хушшинче пĕр кунта 130 тенкĕлĕх сарнă, укçине çийĕнчех пухса панă. Вăтам шкулти учительсем 870 тенкĕлĕх çырăннă. А. Андреев тата М. Сергеев учительсем çĕршер тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Г. ПЕТРОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. **(Телефонпа).** Районри ĕçсыннисем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене пысăк хаваслăхпа çырăнса илеççĕ. Районри финанс пайĕнче ĕçлекенсем 1.725 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ. Вĕсем лотерея билечĕн укçине декабрь уйăхĕнчех тӳлесе татма пулнă.

Районри сыхăну конторинче ĕçлекенсем, сăмахран, Семенов, Александрова юлташсем 40-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине те тӳлесе татнă. Александров юлташ 100 тенкĕлĕх çырăнса, укçине 50 тенкĕ тӳленĕ.

Кушар ялсовет исполкомĕнче ĕçлекенсем 500 тенкĕлĕх çырăннă. Ялсовета кĕрекен колхозсенче те лотерея билечĕсем ăнăçлăн сарăлаççĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. СССР Финанс Халăх Комиссариачĕ укçа-тенкĕ тата япала лотерейине туса ирттерме йышăннине районри ĕçсыннисем хăпăл туса кĕтсе илчĕç. Нумай организацисемпе колхозсенче лотерея билечĕсене сарасси ăнăçлăн пулса пырать.

Государство банкĕн районри отделенийĕнче ĕçлекенсем лотерея билечĕсене 1000 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Банк управляющийĕ Маков юлташ уйăхри ĕçукçин 20 проценчĕ чухлĕ, главный бухгалтер Осипов—25 процент чухлĕ, бухгалтер Самарина—27 процент чухлĕ тата Пантелеймонова юлташ ĕçукçин 50 проценчĕ чухлĕ çырăнчĕ. Çавăн пекех ВКП(б) райкомĕнче ĕçлекен работникисем те лотерея билечĕсене илме çырăннă. Çырăннă хушăрах лотерея билетĕсемшĕн 725 тенкĕ укçа тӳленĕ.

П. АРХИПОВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Ирĕке кăларнă Тихвинра

Вырăссен авалхи хулинче—Тихвинра фашистсен ирсĕр кĕтĕвĕсем нумаях хуçаланаймарĕç. Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем хăватлăн пырса çапса тăшмана çĕмĕрсе тăкрĕç. Хулашăн хаяр çапăçусем вунă кун хушши пычĕç. Тихвин районне нимĕçсем 8-мĕш тата 12-мĕш танковăй дивизисене, Шмидт генералăн 39-мĕш армейски корпусне кĕрекен 18-мĕш тата 20-мĕш моторизованнăй дивизисене тата 61-мĕш пехотнăй дивизие пухса тăратнă пулнă. Анчах çапах та нимĕçсен васкасах тарма тиврĕ. Декабрĕн 8-мĕшĕнчех Хĕрлĕ Çарăн чăçĕсем Тихвин патне çывăхах пырса тухрĕç. Хула таврашĕнче хаяр çапăçусем пуçланса кайрĕç. Пирĕн артиллери çавтери вăйлăн персе тăнине тата пехотинецсем хаярран атакăланине пула нимĕçсем каялла чакрĕç. Çурçĕр иртсен пĕр сехетре Моисеенко командирăн разведчикĕсем хулана пуринчен малтан çĕмĕрсе кĕчĕç.

Тихвинри авантюра нимĕçсене питĕ хакла ларчĕ! Хулана нимĕçсен масарĕ туса хунă. Хăть те кирек ăçталла пăх—пур çĕртте те хĕрессен ретне, пирĕн артиллери çĕмĕрсе тăкнă танксемпе машинăсене çеç куратăн.

Хулари халăх шăтăксемпе подвалсенчен тухрĕ те, хăйне ирĕке кăлараканнисене хаваслăн саламлать. Хулари çынсем нимĕçсем Тихвинра мĕнле ирсĕр ĕçсем туни çинчен каласа парасçĕ. Вĕсем мирлĕ халăха çака-çака вĕлернĕ, çаратнă, хĕнесе асаплантарнă.

Эпир чи аслă урампа утса пыратпăр. Гитлер бандичĕсем вырăссен авалхи хулине мĕнтери тустарса тăкнă, вараласа ирсĕрлентерсе янă! Ирĕклĕх площадĕнчи çуртсенчен ишĕлчĕксем туса хунă. Суту-илу çурчĕсемпе банксене ватса ишĕлтерсе пĕтернĕ. Аптекăра шкафсене тӳнтере-тӳнтере янă, пĕтĕмпех арпаштарса тăкнă. Пурăнмалли çуртсене, шкулсене пăсса пĕтернĕ... Пур çĕрте те бандитсем тунă погромăн паллисем юлнă. Бандитсем памятниксене те ирсĕрлесе мăшкăлланă. Çуртсен стенисем çинче хура сăрпа нимĕçле: «Урамсемпе площадьсенче чарăнса тăма юрамасть», тесе çырнисем курăнаççĕ. Вырăссен хулинче нимĕçле çырнă сăмахсем! Хулари çынсем, кунта çав ирсĕр нимĕçсен шăрши те ан пултăр тесе, саксене пурне те васкасах тасатма тăрăшаççĕ.

Урамсенче хĕрарăмсемпе ача-пăчасем çурçĕр. Вĕсем çутă çине куç хĕссе пăхаççĕ: шăтăксемпе подвалсенче ларса вĕсем кун çуттинчен ютшăннă-çке. Хаклă тăвансем! Мĕнтери инкек курăр эсир! Хулана тытса илсен, нимĕçсем халăха выçăпа аптăратнă. Аптăраса çитнипе ачасем вĕсенчен пĕр татăк çăкăр ыйтсан, фашистсем вĕсене: «Юр çисе пурăнăр. Ав, вăл мĕн чухлĕ сирĕн!», тесе мăшкăлласа ответ панă.

Нимĕçсем халăха çаратнă. Бандитсем Екатерина Моисеевна Максимова патне çĕмĕрсе кĕнĕ те, карчăка сивĕ çĕре урама хăваласа кăларса янă, хваттертен шăрпăкне те хăвармасăрах çаратса тухнă: вăл шутрах чей кашăкĕпе икĕ çăмăл кофтăна та илсе тухса кайнă та, çуртне вут тивертсе хăварнă.

75 çулти Андрей Андреевич Муравьев çапла каласа парать: нимĕçсем мана пилĕк мăшăр атă-пушмак юсама пачĕç, вара вĕсене юсанăшăн тӳлеме ыйтсан, вĕсем мана хĕнесе тăкрĕç, тахçантанпа пухса пынă 500 тенкĕ укçана илсе тухса кайрĕç.

Тихвинра пурăннă икĕ çынăн вилли хулара темиçе кун хушши çакăнса тăнă. Çак çынсенчен пĕри хăма çураккан заводра ĕçленĕ работница Елизавета Андреева пулнине палласа илнĕ. Çак паттăр патриотка хăй патĕнче партизана пытарса усранă пулнă. Çакăн çинчен нимĕçсем пĕлнĕ те вара работницăна урамра çакса вĕлернĕ. Хула çывăхĕнче пирĕн боецсем 12 красноармеецăн виллине тупрĕç. Вĕсене пурне те палламалла марах лутăркаса пĕтернĕ.

Ачасем те хăйсен вăйĕ çитнĕ таран нимĕçсене тарăхтарма тăрăшнă. Петя Васильевпа Тоня Феоктистова нимĕçсен окопне пырса кĕнĕ те унтан винтовкăпа автомат илсе тухнă. Ачасем хĕçпăшала подвала пытарса хунă пулнă, паян вĕсем ăна красноармеецсене пачĕç.

Акă, Тихвинри питĕ авалхи, чулран купаласа тунă пысăк монастырь. Çак монастырьпе вырăс халăхĕн авалхи историйĕн страницисем сыхăнса тăрасçĕ, савăнпа та вăл пирĕншĕн пуриншĕн те хаклă. Фашистсем вырăс культурин памятникĕнчен сысна вити туса хунă. Вĕсем ĕлĕкхи монастырьтен тĕкĕм те тискер тĕрме туса хунă та, кайран вут тивертсе хăварнă. Акă, вăл пирĕн куç умĕнчех çунать. Кирпĕч маччисем ишĕле-ишĕле анаççĕ, стенисем тӳнетӳне каяççĕ, каштисем хура тĕслĕн курăнаççĕ. Нимĕçсем вандализмăн татах тепĕр актне тунипе хăйсене намăса кăларчĕç.

Бандитсем ку хулара совет çыннисене мĕнле мăшкăлласа асаплантарнин юнлă йĕрсене пушар пĕтерсе тăкма ĕлкреймен-ха. Акă, вырăс хĕрĕн вилли выртать. Унăн çырă çӳçĕсем çинче юн çывăрса хытса ларнă, унăн пит-куçĕ вилес умĕн асапланнипе илемсĕрленнĕ. Ирсĕрсем ăна, ураран аманнăскере, кунта сĕтĕрсе кĕнĕ. Хĕрĕн хирĕç тăма та вăй пулман, офицерсен банди çапах та унтан нумайччен мăшкăллана. Нимĕç çĕлен-калтисем хĕре тискер-кайăкла пусмăрланă та, унтан прикладпа çапса пуçне çурса пăрахнă.

Енер монастырь подвалĕнче пирĕн боецсем йывăр аманнă красноармеецсен ушкăнне тупрĕç. Вĕсем нимĕçсем патĕнче тытăнра темиçе кун хушши пурăннă. Вĕсем каласа панисем—нимĕç вăрă-хурахĕсене айăпламалли хаяр акт пулса тăрать. Василий Тимофеевич Громов красноармееца çапăçура тăватă хут амантнă, раснах аллинчен тата хырăмран йывăр амантнă. Вăл упаленсе хамăрăннисем патне кайма пикенсе пăхнă, анчах та унăн вăйĕ пĕтсе çитнĕ те, ăна вара нимĕçсем çавăрса илнĕ. Вĕсем Громова кĕске çуна çине пăрахнă та танкашкасем урлă сĕтĕрсе кайнă. Аманнă боецăн пуçĕ усăнса пынă. Шăн тăпра çине çапăнса пырса вăл пуçне юн кăларичченех амантнă. Вара ăна чӳречисене ватса пĕтернĕ, алăкне тăпăлтарса кăларнă темĕнле пӳрте илсе кĕрсе пăрахнă. Громов тăнне çухатнă, тăна кĕрсен хăйĕн уринче атти суккине асăрханă. Аттине нимĕç салтакĕсем хывса кайнă. Громов вара çĕр каçах çапла çара уран выртнă та, унăн икĕ урине те тăм илсе янă. Медицина тĕлĕшĕнчен ăна нимĕнле пулăшу та паман, 6 талăк хушши çимелли

Мерецков генералăн чăçĕсем тăшмана хăваласçĕ

ТИХВИН, декабрĕн 10-мĕш. («Правда» **хаçатăн спецвоенкорĕ**). Нимĕçсене Тихвинран хăваласа кăларнă Мерецков генералăн чăçĕсем нимĕнле йĕркесĕр каялла чакакан тăшмана ăнăçлăн хăваласçĕ. Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 15 пункта йышăннă, халĕ вĕсем тăшмана хăватлăн хĕссе пыраççĕ.

Холзаков командирăн летчикĕсем тăшмана хирĕç питех те ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, вĕсем нимĕçсен колоннисене ăнăçлăн штурмлаççĕ. Шмидт генералăн 39-мĕш армейски корпусĕн юлашки салтакĕсем таракан çулсем çине Ильин командирăн артиллерисчĕсем вăйлăн персе тăраççĕ.

Противник çынсем тĕлĕшпе те, материалсем тĕлĕшпе те питех те пысăк сухату тӳсет. Тăшман хăй пăрахса хăваракан хĕçпăшалсене взрыв туса сирпĕнтерсе ярать, апла пулсан та пирĕннисем нумай трофейăсем тытса илнĕ.

Тăшман пысăк сухатусем тӳсет

Пирĕн чаçсем нимĕçсене, Елецран хăваласа кăларса янă хыççăн, нимĕн канлĕх памасăр хыçалтан хăваласа пыраççĕ. Тăшман хăйĕн хĕçпăшалне, артиллерине, боеприпасĕсене, автомашинисене çул çине пăрахса хăварса тарать. Кириченко юлташăн кавалеристчĕсем, ĕнер фашистсен тата тепĕр полкне аркатса тăкса, С юханшывĕ хĕррине çитрĕç. Вĕсем тăшманăнне 30 оруди т. ыт. хатĕрсем нумай тытса илнĕ. Крымов юлташ комиссар пулса тăракан чаçри боецсем К. ятлă вырăншăн пынă çапăçусенче тăшмана пысăк сиен кӳнĕ. Пирĕн алла 16 оруди, 11 станковăй пулемет, 11 мотоцикл, 10 автомашина лекнĕ. Нимĕç салтакĕсем хăйсене хыçалтан хăваласа пыракан Хĕрлĕ Çар чаçĕсенчен хăтăлас тесе кăмака трубисем ăшне, маччасем çине, улăм куписем ăшне пытана пытана ларaççĕ. Çапла майпа вĕсем çĕрле хăйсен чаçĕсем патне шăвăнса тухма ĕмĕтленеççĕ.

Нимĕçсенчен ирĕке кăларнă ялсенчи халăх Гитлер воякĕсене шыраса тупса тытма Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшать. Ольховка ятлă ялта колхозница А. пирĕн боецсене нимĕçсем пытанса ларакан пĕр пӳрт тĕлне кăтартса янă.

Руссиянов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри гвардеецсем геройла çапăçаççĕ. Штыкпала тата гранатăсемпе ăстан çапăçса вĕсем нимĕçсем вырнаçса ларнă ялсем çине харсăрлăн пыра-пыра тапăнаççĕ, гитлерла бандитсене нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыраççĕ.

Фронтăн тепĕр участокĕнче Подлохва юлташăн чаçĕ тăшмана хирĕç активлăн контрнаступлени тăвать. Ку часть нимĕçсен аллинчен ял хыççăн ял туртса илет. Ĕнер Подлохва юлташăн чаçĕ нимĕçсене Т. ятлă пунктран хăваласа кăларчĕ. Тăшман пысăк сухатусем тӳсет.

ЖУКОВИН.

(«Правда», декабрĕн 12-мĕш).

Мамедов геройăн хăюллă ĕçĕ

Хĕрлĕ Çарăн старший сержантне Истрафуил Магорилович Мамедова паян Совет Союз Геройĕн званине панă.

Мамедов юлташ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре хăюллăпа паттăрлăх, хăйĕн халăр курайманлăхне тата хăйĕн патриотизмне кăтартса паче.

1941 çулти декабрĕн 3-мĕшĕнче Пусынька ялне хӳтĕлесе тăракан красноармеецсен группине нумай йышлă противник кĕтмен çĕртен атакăланă. Тăшман артиллерийĕн, минометсенчен тата пулеметсенчен тăвăллă вут-çулăм тăкма пуçланă. Мамедов юлташ хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр тăшман хĕснине хăюллăн чарса тăнă. Фашистсене 30—40 метр çывăха ярса, Мамедов юлташ вĕсен çине автоматран хăватлăн пеме пуçланă. Автоматăн боеприпасĕсем пĕтнĕ хыççăн, Мамедов юлташ тапăнса пыракан тăшмана винтовкăсенчен пĕр вĕçĕмсĕр персе тăнă, винтовкăсене ăна радистсем тата аманнă боецсем авăрласа парса тăнă. Ун хыççăн Мамедов юлташ: «фашистла йытăсене çапăр!»,—тесе чĕнсе, штык вĕçĕпе атакăна кĕнĕ, хăй вăл виçĕ нимĕçе штыкпа чиксе пăрахнă.

Нимĕçсем гранатăсем ывăтса, пирĕн рацине стройран кăларма хăтлансан, Мамедов юлташ хăюллă çапăçура татах та пиллĕк фашиста пĕтерсе тăкнă, рацине сыхласа хăварнă.

Мамедов юлташ хăйĕн боецĕсемпе пĕрле тăшман хĕснине 10 сехет хушши, çĕнĕ вăй пырса çитиччен, чарса тăнă.

Хăйĕн участокне геройла хӳтĕлесе, Мамедов юлташ автоматран, винтовкăсенчен персе тата гранатăсем ывăтса хаяр тата вăйсем пĕр пек чăр çапăçура фашистсен 70 салтакне тата виçĕ офицерне пĕтерсе тăкнă.

Çапăçу пĕтнĕ хыççăн Мамедов юлташ канмасăрах тепĕр ответлă задание пурнăçа кĕртме тухса кайнă. (ТАСС).

СОВЕТ СОЮЗĔН ГЕРОЙĔПЕ ГРОМОВ ЮЛТАШПА КАЛАÇНИ

Çак кунсенче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче виçĕ уйăх пулнă хыççăн Совет Союзĕн Геройĕсем Громов, Байдуков тата Юмашев юлташсем Москава тавăрăннă. «Правда» хаçатăн корреспонденчĕпе калаçнă чухне Совет Союзĕн Геройĕ Громов юлташ çакна пĕлтернĕ:

— Эпир Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене Америкăри авиаци техникипе паллаштма тата унпа Хĕрлĕ Çарта усă курма май пурринне тĕпчесе вĕренме кайрăмăр. Эпир августăн 28-мĕшĕнче вĕçсе тухса кайрăмăр та пилĕк талăкран вара Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене çитрĕмĕр. Сан-Франциско, Вашингтонра тата Америкăри ытти хулисенче те пулса куртăмăр. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствин, авиаци министерствин представителĕсемпе тата тĕрлĕ ĕçлĕ çынсемпе тĕл пулса калаçнипе эпир пĕр уйăх ытларах иртертĕмĕр. Хальхи вăхăтра американецсем йывăр бомбардировщиксем тăвас ĕçе анлăн сарса янă, истребительсен авиацине çĕнĕрен хĕçпăшаллантараççĕ. Америкăра çарăн пур пăйсене валли те тĕрлĕ хĕçпăшал тăвас тĕлĕшпе анлă строительство пуçласа янă. Çуркунне тĕлнелле ку строительство çав тери анлăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарне хальхи вăхăтри çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантармалăхах, сарăлса çитĕ. Американецсем ялан тенĕ пекех пĕр-пĕр йышши япала сăнамалла темиçе экземпляр тăваççĕ те, вара часах серипе туса кăларма тытăнаççĕ. Çапла майпа вĕсем пахалăх енчен лайăх, хисеп енчен нумай хĕçпăшал туса кăларма пултараççĕ.

Виçĕ державăн Мускавра пулса иртнĕ конференцийĕ хыççăн Совет Союзне пулăшу план тăрăх тăтăшах килес тăма тытăнать. Америка халăхĕн анлă массисем Совет Союзĕ çине ăшшăн кăмăлласа пăхаççĕ. Американецсен питĕ пысăк пайĕ фашистсене кураймасть. Вĕсем пурте пирĕн фронтсенче пулса иртекен вăрçă ĕçĕсене питĕ тĕплĕн сăнаса пыраççĕ. Совет Союзĕ Гитлерла Германие хирĕç мĕнле çапăçни çинчен калакан материалсене хаçатсен пĕрремĕш страницисенче пичетлесе кăлараççĕ.

Эпир Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕпе Рузвельтпа, Америка çар штабĕн начальникĕпе генерал Маршаллпа, унăн помощникĕпе г. Арнольдпа тата г. Гопкинспа, г. Стеттиниуспа, çар министрĕпе Стимсонпа, унăн заместителĕпе Маклайпа курнăçса калаçрăмăр.

Президент Рузвельтпа эпир пĕр сехет хушши калаçрăмăр. Пирĕн калаçу теми—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен Совет Союзне самолетсем ярса тарасси çинчен тата çуллĕр ыйтăвĕсем çинчен пулчĕ. Президент Рузвельт пирĕн Хĕрлĕ Çарпа, унăн ăнăçлă ĕçĕсемпе, эпир фашистсене хирĕç мĕнле кĕрешнипе интереслеччĕ. Эпир хамăр та Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи çар строительстви, уйрăмăн илсен авиаци строительстви çинчен мĕн шутланине каласа патăмăр.

Эпир Америкăна çитнĕ ятпа Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ССР Союзĕнчи ĕлĕкхи посолĕ г. Девис пысăк йышăну турĕ. Йышăнура Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен министрĕсем тата Америка правительствин деятелĕсем нумайăн пулчĕç. Американецсем Хĕрлĕ Çарпа, унăн моральлĕ состоянийĕпе, техникипе, фашистсен танкĕсене хирĕç кĕрешмелли тактикăллă мелсемпе, пирĕн авиацине, промышленноçпа, унăн ĕçĕпе тата çитĕнĕвĕсемпе интереслеччĕç.

Эпир пуринчен ытларах авиаци базисене кайса сӳрерĕмĕр. Кунта эпир Америкăн авиаци техникипе тĕплĕн паллаштрăмăр; кунтах эпир Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче туса кăларакан машинăсемпе вĕçсе пăхрăмăр.

Америкăри Пĕрлешӳлле Штатсене кайса килнĕ хыççăн эпир çакна калама пултаратпăр: Америка Совет Союзне пăракан пулăшу кунран кун ытларах та ытларах ӳссе пырĕ.

Америкăран эпир тăват моторлă вĕçекен пысăк кимĕпе Лондона çитрĕмĕр. Кунта эпир Англин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕпе г. Иденпа тата штабри офицерсемпе курнăçса калаçрăмăр. Англи çарĕ лайăх хĕçпăшалланса хатĕрленнĕ. Англин флотне пăхса та ытарма çук.

— Америкăран Англие тухса каяс умĕн, — тенĕ юлашкинчен Громов юлташ, — эпир Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Совет Союзне, Германи захватчикĕсене хирĕç паттăрăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çара парса тăракан пулăшу кашни уйăхрах, кашни эрнерех ӳссе пыракан хамăр куçпа курса ĕнентĕмĕр. (ТАСС).

—o—

«ПРИНЦ УЭЛЬССКИЙ» ЛИНКОРПА «РИТАО» ЛИНЕЙНАЙ КРЕЙСЕРАН ЭКИПАЖĔСЕНЧЕН 2000 ÇЫННА ЫТЛА ÇАЛНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Принц Уэльсский» линкорпа «Ритао» линейнăй крейсерăн экипажĕсен çăлăнса юлнă членĕсем Сингапура пырса çитнĕ. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, çав икĕ карап çинчи çынсенчен 2000 çынна ытла çăлнă.

США Германипе Италие хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен сеначĕ тата представительсен палати Германипе Италие хирĕç вăрçă пуçласси çинчен решени йышăннă. Çак решение Берлинпа Римран Германипе Италия Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе тытса пыракан дипломатиллĕ отношенисене татса, США-на хирĕç вăрçă пуçлани çинчен калакан хыпарсем çитсенех йышăннă.

Конгресăн çак решенине Рузвельт паянах алă пуснă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Япони хушшинчи вăрçă

ТОКИО, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС) Император ставкин тинĕс-çар секцийĕ 11 сехет те 15 минутăра çапла пĕлтернĕ: декабрĕн 10-мĕшĕнче, çутăласпа, Японин тинĕс-çар флочĕн чăçĕсем Астра фортне (Гуам утравĕ çинче) тăватă енчен те атакăласа, туртса илнĕ. Япони флочĕ Америкăн 3000 тонна водоизмещенийлĕ танкерне тытса илнĕ.

Декабрĕн 9-мĕшĕнче Японин Малайăри тинĕс-çар флочĕн соединенийĕсем Трантанри авиаци базисем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. 10 самолета пĕтерсе тăкнă. Декабрĕн 9-мĕшĕнче ирхине Лусон утравĕ çине иккĕмĕш хут пырса тапăннă, бомбăсене çар казармисемпе складсем çине пăрахнă. Çав кунах Малайăн хĕвелтухăç сыранĕ патĕнче Антлин 7000 тонна водоизмещенийлĕ грузовой пароходне путарнă. Малая патĕнче çапăçнă чухне (вăл çалăçу «Принц Уэльсский» линкорпа «Ритао» линейнăй крейсера путарнипе вĕçленнĕ) Япони авиацийĕн 3 самолет пĕтнĕ. Филиппины çине десант антарнă чухне Японин подводнăй лодкăсемпе кĕрешекен пĕр истребитель пĕтнĕ.

ГАИТИ ЯПОНИЕ ХИРЕÇ ВĂРÇА ПУÇЛАНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Гаити правительстви Японие хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене мĕн вăй çитнĕ таран пулăшса тăма пулнă.

ÇĔНĔ ЗЕЛАНДИЯ ЯПОНИЕ ХИРЕÇ ВĂРÇА ПУÇЛАНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Çĕнĕ Зеландия хăй декабрĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа Японипе вăрçăллă лару-тăрура пулни çинчен пĕлтернĕ.

ПАНАМĂРА НИМĔÇСЕМПЕ ИТАЛЬЯНЕЦСЕНЕ АРЕСТЛЕНИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Кристобалран (Панама каналĕн зони) полици нимĕçсемпе итальянецсене арестлеме тытăнни çинчен пĕлтереççĕ. Панамăра темиçе çĕр нимĕçе арестленĕ те ĕнтĕ.

ЯПОНИПЕ ТАИ ПĔР-ПĔРИНПЕ ВĂРÇА ТĔЛĔШПЕ СОЮЗ ТУНА

ТОКИО, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, информаци совечĕ заявлени пичетлесе кăларнă, çав заявленире паян Японипе Таи пĕр-пĕринпе «наступлениллĕ тата оборонăллă союз» тунине çинчен каланă.

ТАИ ФОНЧĔСЕНЕ СЕКВЕСТР ТУМА ПРИКАЗ ПАНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт Таи государствин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи фончĕсене секвестр тума приказ панă.

ЯПОНИ АВИАЦИЙĔН ÇУХАТАВĔСЕМ

ТОКИО, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, император ставкин тинĕс-çар секцийĕ 18 сехет те 50 минутăра çапла пĕлтернĕ: Япония Англипе Америкăна хирĕç вăрçă пуçланă вăхăтранпа Япони авиацийĕн 38 самолет пĕтнĕ; тинĕс-çар флочĕн нимĕнле çухатусем те пулман,—тенĕ.

НИКОЛЬС АЭРОДРОМĔПЕ КАБИАРИ ТИНĔС-ÇАР БАЗИ ÇИНЕ ЯПОНИН 100 БОМБАРДИРОВЩИКĔ ЫТЛА ПЫРСА ТАПАННĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Манилăран çапла пĕлтерет: декабрĕн 10-мĕшĕнче Никольс аэродромĕ çине тата Манила çывăхĕнчи Кабиари тинĕс-çар базине Японин 100 бомбардировщикĕ ытла пырса тапаннă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕНЧЕН АНГЛИЕ ПĔР АНСА ЛАРМАСĂР ВĔÇСЕ ÇИТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС) «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, англичансен экипажĕ тĕнчери чи пысăк икĕ моторлă самолетсенчен пĕринпе—«Перти страйт—20» самолетпа — Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен Англие пĕр анса лармасăр вĕçсе çитнĕ. Çав самолетăн çунаттисем 32,4 метр тăршшĕ. Ăна питĕ çӳлте вĕçсе çӳреме тесе тунă, унта 36 пассажир, команда çыннисем—5 çын тата 5000 кĕрепенке багаж вырнаçать. Çав самолет сехетре 360 км. каять. Вăл Англипе Ирланди хушшинче рейссем туса вĕçсе çӳремелле.

АНГЛИН ГОНКОНГРИ КОМАНДОВАНИН КОММЮНИКИ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Гонконгра пичетлесе кăларнă коммюникере çапла каланă: японецсем Англи войскисен позицийĕсене атакăланă та англичансен çыран хĕрринчи хăшпĕр посчĕсене йышăнса илнĕ. Японецсем малалла кĕрсе пырассине чарса лартнă. Çапăçусем халь те пулса пыраççĕ. Пăхса курма кансĕр пулсан та, Англи артиллерийĕ вăйлăн та лайăх персе тăнă. Декабрĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи войскисем японецсен ротине хытах пырса çапнă.

НЬЮ-ЙОРК ПОРЧĔ ПАТНЕ ПЫМАЛЛИ ВЫРАНСЕНЕ МИНАСЕМ ХУРСА ТУХНИ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Тинĕс-Çар министерстви Нью-Йорк порчĕ патне пымалли вырăнсене минăсем хурса тухни çинчен пĕлтернĕ.

—o—

Европăри халăхсем „çĕнĕ йĕркене“ хирĕç

ЖЕНЕВА, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Нацистсен «Дас Рейх» хаçачĕ Германи оккупациленĕ çĕршывсенче пурнăç начарланса çивĕчленнине пула Германи пуçĕнче тăракан çынсем ытла та пăшăрханма пуçланине палăртса тăракан статья пичетлесе кăларнă. Çав хаçат Европăри халăхсем «çĕнĕ йĕркене» хирĕç тăрасçĕ тесе ӳпкелешет. «Эпир пĕлетпĕр, — тесе йышăнать хаçат,— материальнăй положени начарланни çĕнĕ идейăна начар енчен кăтартса парать ĕнтĕ вăл. Савăнпа та Европăри халăхсене хăйсене çĕнтернĕ ушкăнсен идейисене ăнланса йышăнса илмĕ хĕн,» — тесе çырать хаçат малалла.

Франçин Нациллĕ Комитетне йышăнни

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци, Люксембург, Голланди, Югослави тата Норвеги правительствисем ирĕклĕ Франçин Нациллĕ Комитетне йышăннă. СССР, Бельги, Польша тата Чехословаки правительствисем Нациллĕ Комитетпа ĕнтĕ официальнăй дипломатипе çыхăнса тăраççĕ.

ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

ШАХАСАН. Шăхасанти вăтам шкулта çар ĕçне вĕрентес ĕçе кирлĕ пек организациленĕ. Вĕренекенсене пурне те тенĕ пекех сывлăшран килсе тапăнасран тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕрентес тĕлĕшпе организациленĕ кружока явăçтарнă. Кружокăн занятийĕсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Паянхи куна шкулта 200 ача ытла ПВХО значокĕн нормисене панă.

Халĕ шкулта вĕренекенсене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес тĕлĕшпе ĕçсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Шкулăн 30 мăшăр тата вĕренекенсен 300 мăшăра яхăн йĕлтĕр пур. Çав йĕлтĕрсемпе туллин усă кураççĕ.

Йĕлтĕрпе çӳреме вĕренес тĕлĕшпе икĕ хутчен заняти пулса иртнĕ. Çавăн хыççăн декабрĕн 4-мĕшĕнче пĕрремĕш йĕлтĕрлĕ поход ирттернĕ.

Шкулта йĕлтĕрпе çӳреме вĕренме икĕ команда организациленĕ. Вĕсем йĕлтĕрпе хăвăрт çӳреме тата йĕлтĕр çинче пăшал пеме, гранатăсемпе бутылкăсем ывăтма вĕренеççĕ. Ку тĕлĕшпе 1-мĕшпе 2-мĕш командăсем ăмăртаççĕ. Ăмăртура Г. Сорокин команди малта пырать. Унăн командинче вĕренекенсем йĕлтĕрпе хăвăрт çӳреме, гранатăсемпе бутылкăсем ывăтма вĕренсе çитнĕ.

Шкулта çар ĕçне вĕренме йывăçран гранатăсем, кĕреçесем тата пăшалсем сителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Ку тĕлĕшпе шкулти военрук М. Моисеев юлташ кăтартуллăн ĕçлет. Вăл йĕркелесе пынипех çак кунсенче 20 çухрăмлă йĕлтĕрлĕ поход ирттерме хатĕрленеççĕ.

В. ЯКОВЛЕВ.

Финанс планне срокчен тултарассишĕн

ОКТЯБРЬСКОЕ. Урхас-Кушкă ялсовечĕ кашни кварталтах финанс планне ирттерсе тултарса пырать. Иртнĕ çулхи финанс планне ирттерсе тулгарнăшăн ялсовет районри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава илнĕ. Хĕрлĕ ялава вĕсем халĕ те хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ. Финанс планне кăçалхи виççĕмĕш кварталта та 115 процент тултарнă. Халĕ тăваттăмĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн тăрăшаççĕ.

Ф. НИКОЛАЕВ.

Ответлă редакторшăн А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6693

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 651. Ф. б. 58. 84 п. л.